Кӑҫалхи «Пӗтӗм чӑваш диктанчӗ – 2019» акцие Чӑваш чӗлхи кунне тата Шупашкар хули йӗркеленнӗренпе 550 ҫул ҫитнине халалланӑ.

Диктанта ака уйӑхӗн 25-мӗшӗнче 13:00 сехетре Шупашкарти тӗрлӗ лапамра (И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университетӗнче, И.Я. Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика университетӗнче, Чӑваш Республикин вӗренӳ институтӗнче, Чӑваш Республикин Наци библиотекинче) ҫыртарӗҫ. Унсӑр пуҫне текста «Тӑван радио» тата «Наци радиовӗ» эфирӗсенче вулӗҫ.

«Пӗтӗм чӑваш диктанчӗ – 2019» акци сӑн-сӑпачӗ пулма Чӑваш наци радиовӗн редакторне **Алексей Александрова (Сантӑр Элтиярне)** ҫирӗплетнӗ, вӑл – И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университетӗнчи вырӑс тата чӑваш филологийӗпе журналистика факультечӗн студенчӗ.

Диктант текстне театрпа, Тани Юн пултарулӑхӗпе ҫыхӑнтарнӑ; текст авторӗ – Владислав Николаев журналист тата ҫыравҫӑ.

Пӗтӗм чӑваш диктантне ҫырас кӑмӑллисене 12 сехет те 50 минут тӗлне И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университетӗнчи вырӑс тата чӑваш филологийӗпе журналистика факультетне ҫитме йыхравлатпӑр, адресӗ: Шупашкар хули, Университет урамӗ, 38-мӗш ҫурт, 4-мӗш хутри 434-мӗш пӳлӗм.

Хапăл туса кĕтетпĕр!